Т 19
Ч-42446



Валентина Тарават

# СЕНКЕР ИНҪЕТ

## *Сăвăсем*

*Ульяновск*
*2009*

Национальная библиотека ЧР
4-042446

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

М т 3 3835 Т 5000 1989г

***Валентина Тарават***

# *СЕНКЕР ИНÇЕТ*

## *Сăвăсем*

**Ульяновск**
**2009**

**ББК** 84(2=ЧУВ)6
Т 19

Тарават В. Н.
ДАРСТВЕННЫЙ ЭКЗ.

**Тарават В.**
Т 19 **Сенкер инçет**. Сборник стихотворений на чувашском языке. -
Ульяновск. 2009. – 114с.

Валентина Тарават (Игнатьева Валентина Николаевна) Тутар Республикине кӗрекен Çӗпрел районӗнчи Турхан Упи ялӗнче çуралса ӳснӗ.

Раççей культура тава тивӗçлӗ ӗçченӗ. Вӑл Раççей Писателӗсен союзӗн членӗ, Чӑваш композиторӗсен Ассоциацийӗн членӗ, Ульяновск облаçӗн хисеплӗ гражданинӗ, Ульяновск облаçӗнчи Чӑнлӑ районӗн хисеплӗ гражданинӗ. Нумай конкурссен лауреачӗ. Унӑн ятне «Лучшие люди России» энциклопедие кӗртнӗ.

Икӗ чӗлхепе çырать. Вӑл вунултӑ кӗнеке авторӗ. Çитмӗл ытлӑ юрӑ çырса кӗвӗленӗ. Вӗсем нумай юрӑçсен репертуарне кӗнӗ.

4-42446
ПРОВЕРЕНО 13 СЕН 2017

Тарават В., 2009



***Хăват, ынат, хивре çунат…,***
***Çак пĕтĕмпех вăл – Тарават.***

***Юрий Семендер***



# ХАМ ÇУЛПАХ

* * *

Чун-чĕре туртать,
Сакăл ут юртать…
Ав сенкер инçет
Ялкăшса çиçет…

Сăввăм – чăн çунат,
Кĕввĕм – чăн хăват.
Юррăм – чун хевти,
Пултăр кун çути.

Туякан – сисет.
Ыр сунан – кĕтет.
…Ав сенкер инçет
Ялкăшса çиçет.

## ХАМ ÇУЛПАХ

Утас килет-çке хам çулпах,
Пит такăр, тӳрĕ пулмасан та.
Чечек çех мар, пиçен, хупах…
Ик енĕпе алне тăссан та.

Утас килет-çке хам çулпах,
Çумрах таси, яки пулсан та.
Çемçе пушмакăм кантăрах.
Ашса тухмашкăн кирлĕ атă.

Утап, чупап эп хам çулпах.
Шанни, кĕтни хăй чăн маяк-çке.
Кахал çынна лекмест çăмах.
Пĕр юмахра сĕтелĕ янтă…

Телейшĕн кирлĕ кĕрешме,
Анчах, йĕри-тавра – хӳме…

* * *

- Турăран мĕн ыйтни йăлт пулсассăн
Мĕн-ши ыйтăн унран йăлăнса?
- Сăхсăхса эпĕ сывлăттăм ассăн:
"Тăнăç пар пур çынна та савса.

Иÿçĕк кăмăл кăштах пылаклантăр,
Тĕксĕм сăн çуталайтăр пăртак.
Кÿршине кÿрши ан такăнтартăр.
Никама та ан ертĕр амак...

Куккукран çăмăлттайлăхне сиртĕр:
Ан пăрахтăр тăван ачине.
Вăл курать-çке, туять-çке йăлт витĕр
Халăх савăнăçне, нушине..."

Чăн-чăнах тархаслас-тăк – ăнланĕ.
Тăнăç анĕ. Ман халăхăм канĕ...

* * *

Паян ирпе эп куртăм куккука.
Апла пулсан çанталăк ăшăтать.
-Ку-ку! Ку-ку! – тавралăх янăрать,
Сÿпĕлтетет куккук пура, çука…

Миçе хутчен пупленĕ эп унпа.
Вăл çулсене шутланă,пурлăха…
Шăпаçăм килĕшмерĕ куккукпа.
Авăрланать çавах та ман хăлха…

Пуянлăхăм та çук-çке шутлама.
Кун çулăм та пĕр вырăнта тăмасть.
-Куккук, пилле кун çул ывăлăма,
Сун такăр çул пурнăçпала утма.

* * *

Эп сăвăç кăна мар.
Хĕрарăм эп. Анне-çке.
Хам чунăм апатне сĕнеймĕп çемьене.
Кил-çурт пулин таса,
Чĕлхем пулин те çепĕç,
Çемье кĕтет вăй-халлăх
Тутлă апатне.

Эппин эп шуçăма
Пирвай сунам-и сывлăх,
Çÿрем-и чĕрне вĕççĕн
(кил-йышăм кантăрах),
Кил-йышăм йăлл! кулсан –
Телей çÿрет-çке çывăх,
Кĕттермĕ сăвă-юрă
(таçта çĕтсе) вăрах.

## КАÇАР

Тӳрккесрех ман чӗлхеçӗм.
Каçар.
Каçарсам чее тилӗ пулманшăн.
Вăхăт-вăхăт çӗлен эпӗ саншăн.
Пирӗшти вăхăт-вăхăт.
Каçар.

Ăнланма пӗлейменшӗн
каçар.
Каçарсам икӗ питлӗ пулманшăн.
Кӗлчечек вăхăт-вăхăт эп саншăн.
Вăхăт-вăхăт пиçен эп.
Каçар.

Ытлашши туйăмсемшӗн
каçар.
Каçарсам пӗр-пӗр чух пит йӗплишӗн.
Пӗрмаях çиле хирӗç утнишӗн,
Шыва хирӗç ишнишӗн
каçар.

Гороскоп тăрăх эп – «Арăслан»,
Çулпала эпӗ – «Йытă».
Ăнлан.

## АСА ИЛӲ

Паян ӑҫта кӑна пулман-ши,
Кампа кӑна эп тӗл пулман.
Ҫӑтмах та алӑк уҫрӗ маншӑн…
Сивлеккӗн кӗтрӗ сӗм вӑрман…

Ачалӑх сӑпкинче килентӗм.
Чуна  ай-яй! аван кунта!
Ҫынсем вара япшар, илемлӗ.
Ҫук кулянма нимле сӑлтав.

Ҫамрӑклӑхра ӑс-тӑн туптарӑм,
Ҫӗр чӗтретсе телей шырарӑм.
Ҫӗтсе кӗрсен сӗм вӑрмана
Хӗвел кӑтартрӗ ҫул мана…

Вӑтамлӑхра – ларса шутларӑм:
Мӗнле анне? Мӗнле эп арӑм?
Анчах пӗр май хама ятларӑм:
"Куҫна уҫсам. Мӗн чуль сан парӑм!"

Хам айккинчен пӑхса сӑнарӑм:
Ҫутах-ши? Тӗксӗм-ши сӑнарӑм?
Анчах мӗнле пулсассӑн та –
Пур кунӑмшӑн, ыр Туррӑм, тав.

* * *

Шухăшсемпе таçта вĕçетĕп.
Анчах, туятăп, хал çитмест.
Вĕçес çула ăспа виçетĕп.
Хушать чĕрем татах виçме…

Кунта пур алă тăсакан та,
Пур тăкакан та шакăр чул…
Пĕр чух пăхатăп – çутă кантăк,
Чĕнет асамлăн хаклă мул.

Алла тăсатăп çеç – пуш-пушă.
Пуш уй-хирте – çара çерçи…
Кăшт айккине – пĕçеркĕç – пушă…
Ĕçре çунан – хуçа тарçи.

Çап-çутă инçете вĕçетĕп,
Çунатсене лăс-лăс силлетĕп.

## ЭП ШУТЛАТĂП...

Ватăлатăп-ши е ăсланатăп –
Килĕшменлĕх ÿсет чунăмра.
Шуррăн курнă – сархайнăн куратăп.
Тексĕм курнă – халь çуттăн умра.

Те хытатăп тесе те шутлатăп,
Те вĕрентĕм кăштах тирпее.
Темиçе хут виçсен çех касатăп,
Виçме çуккă анчах телее...

Эп шутлатăп, шутлатăп, шутлатăп...
Эп виçетĕп, виçетĕп çич хут.
Анчах мĕншĕн пĕр май такăнатăп?
Тăванпа танлашмасть пуль çав ют.

## ЧИРЛЕНĔ ВĂХĂТРА

Ывăç-ывăç им-çам эп ĕçетĕп,
Ăшă ваннă, укол, пыллă чей.
Ĕçĕмсем черетре ретĕн-ретĕн…
Кахала пемелле хăçанччен?

Чунăма ачашлать-çке кахаллăх:
"Лăплансам. Манпа чух канлĕрех.
Вăхăт пур тем чухлех çывăрмалăх,
Кÿршĕпе ваклама – тем чухлех.

Упăшку, ав, çăвать чашăк-тирĕк.
Ывăлу кил-çурта тирпейлет.
Пурнăç мар. Чăн çăтмах халĕ пирĕн.
Ак, часах чăн-чăн пурнăç килет."

Эх, лăпкать вăл чуна! Эх, лăпкать!...
Хăй мана шелемесĕр пăвать…

* * *

Çил пек вĕçетĕп пур çĕрте.
Кирлех пулсан – вакка сикетĕп…
Канап ирпе, ĕçлеп çĕрле.
Мĕн пуласса чунпа сисетĕп.

Чăрмавлăх мар мана çăра,
Хупса хумашкăн шутласан та.
Татма пултарăп сăнчăра,
Хăш чух çиппе татаймасан та…
Анчах…
Асрах кил-йыш сасси.
Вăл – чи пахи, вăл - чи асли.

*   *   *

Çаврăнать çавра çил…
Аякра тăван кил.
Кăшкăрать тăван кил:
” Эп парсаччĕ-çке пил…
Çав пиле аса ил.
Чунна тăвăр чух – кил,
Пур сĕткенĕме ил!”

Ч-42446
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
Чувашской Республики

* * *

Чарăнми шĕпĕлтетеççĕ
Çамрăк çăкасем.
Мĕн çинчен ĕмĕтленеççĕ?
Мĕн пуплеç вĕсем?

Пуçăма тайса итлетĕп
Çак калаçăва.
Иртнине аса илетĕп
Эп. Пурнăçăма…

Пăшăл пăтти çитеретĕп
Эп çăкасене.
Шухăш çăмхине сӳтетĕп…
Пĕлчĕр пулнине.

Чĕрере вĕсем упраччĕр
Халь мĕн илтнине.
Ывăнсассăн – пачах манччăр
Вăрттăнлăхсене…

## СУТМĔ НИКАМА

Çут çанталăк! Иксĕлми эмел эс.
Пĕр санпа сиплетĕп эп хама.
…Ешĕл ращана чуна уçам-и?
Лăпкăн итлĕ. Сутмĕ никама.

Ирсĕрсем тураттине хуçсан та,
Шăппăн çеç шăлать вăл куççульне.
Ăнланать çынна темле пулсан та,
Йыхăрать сăпайлăн ытамне.

Кайăк-кĕшĕк çавăнпах иленнĕ.
Юрăпа телейлĕ çак çăтмах.
Чун ăшши пуртан раща илемлĕ.
Пархатарлăхне çын куртăрах.

* * *

Çурхи куна мĕскер çитет?
Темле асамлăх пур унра.
Çурхи хĕвел анчах сиплет
Пур сурана. Юлать чунра.

Çурхи куна мĕскер çитет?
Унра мĕн чул сӳнми хăват!
Вăл, ырă çын пек, тараваt –
Çĕклем-çĕклем илем сĕнет.

Çĕклем-çĕклем илем сĕнет.
Сĕнет телей те юрату.
Пĕр эс пуртан кун-çул тату,
Ыр çуркунне! Пур çын пĕлет.

Куллу пĕр пек пур çыншăн та.
Сана – мухтав та пысăк тав!

* * *

Хур кайăксем кăнтăралла
хускалчĕç,
Салхуллăн сыв пуллашрĕç
пирĕнпе.
Ĕнер анчах çут кӳлĕ пек
тасаччĕ,
Паян йĕрет тупемĕр
куççульпех.
Шупкалнă ялăм тинкерет
хурланнăн,
Сивлек çанталăк килешмест
ăна.
Кĕркуннере, тен, ытларах-и
шанчăк –
Çĕн çемьесем чăмăртанаç
кăна!
Кĕрхи пуянлăх – чун хавалĕн
пайĕ,
Унпа пĕрле телейлĕх кĕтĕрех.
Çут туйăма кичемлĕх те
хуплаймĕ,
Телей çăмхи чупайтăр ĕмĕрех.
Сĕтелĕ пултăр апатпа тулли.
Янратăр уççăн ача-пча кулли.

* * *

Йывăçсем тĕлĕреççĕ.
Ĕнтĕркенĕ çырма.
Ылтăн çулçă чĕкеç пек
Вĕçсе килчĕ ума.
Вăл ăçта-ши упраннă?
Кам сыхланă ăна?
Питĕ хаклă тупра пек
Ачашлать вăл чуна.
Вăл çын пек тапаланнă
Пытанма инкекрен.
Пур-пĕрех-çке аманнă.
Çил-тăман шеллемен.
Ман киле алăк уçă.
Канлĕ ун ăшшинче.
Пурăнах, ылтăн çулçă,
Кĕнеке хушшинче.

## КАНЛĔХ

Шăп килте.
Телефон шавламасть.
Алăка та никам шаккамасть.
Мĕн амакĕ?

Вăй вылятчĕ юнра халь анчах.
Алăсем ĕç тытмаççĕ пачах.
Măкалать пек ăс-хакăл.

Канлĕх кĕтрĕм.
Халь канлĕх – пĕр лав.
Çырăнмасть калăпланă калав.
Пур çынна та эп – хапăл.

## ШАНĂР

Ан кӳлешĕр!
Кӳлешӳ ҫынна таптать.
Ан кӳлешĕр!
Кӳлешӳ ҫынна ватать.
Ан кӳлешĕр!
Кӳлешӳ телей тăшманĕ.
Шанăр! Шанăр!
Шанăҫра ҫеҫ чунăр канĕ.

Шанăр! Шанăр!
Чунăра хавассăн уҫăр.
Шанăр! Шанăр!
Телейпе ҫуталтăр куҫăр.
Шанăр! Шанăр!
Шанăҫра – умри пуласлăх.
Шанăр! Шанăр!
Шанăҫ – тĕнче евĕр аслă…

* * *

Чечек курсассăн –
Чун кĕвве кĕтет.
Килсессĕн кĕвĕ –
Чун ташша сĕвет.

Вĕçевлĕ – шухăш,
Кăмăлăм – сипет.
Вăл пур çынна та
Çут кун-çул пиллет

* * *

Камран-ши ҫут хӗвел именчӗ?
Лӑпкатчӗ халь анчах куҫа.
Самант тӳпемӗр тӗксӗмленчӗ:
Сапать, сапать вӑл шур пӑрҫа.

Ирпе шутланӑ ӗҫ путланчӗ.
Пур тӑрӑшу та – харама.
-Хам! Хам! – вӗрсе вӑрҫать,
ав, анчӑк.
- Эс мар! Пур айӑп та – хамра.
Кам чарнӑ ҫанӑ тавӑрма?!

Ай-яй! Тӳпен пӑрҫи нумай-ҫке!
Сапса тултарчӗ лӑк тулли.
Тӳпе миххи пушаннӑ майӑн
Умра ҫиҫет хӗвел кулли.

Ҫынпа ҫанталӑк пӗрешкел
пек:
Йӗрес, кулас кӗтмен ҫӗртен.
…Пуҫланӑ ӗҫӗмсем кӗтеҫҫӗ.
Пӗри васкавлӑ тепринчен.

* * *

Таçта çĕтсе çӳренĕ пуль çулсем…
Таçта кама илсе çитернĕ пулĕ.
Пулни-иртни асрах иккен вĕсен –
Санаваскатнă ахрăма пĕр çулĕ.

Тĕл пулăва кĕтменччĕ эпĕ вуç.
Асра тытманччĕ, тĕлĕкре курманччĕ.
Чă-р-р! пăхрĕ ман çине ик çăлтăр-куç.
Чă-р-р! пăхрĕ те – чăл-пар! ман канăç ванчĕ.

**Ниме тăман сăмах**

Ниме тăман сăмах
Ниме тăман çынран.
Ларать пыра çăмах.
Ак, ишĕлет çыран…
Пĕр шутлами чăман.
Эс халĕ – тинĕсре..
Тухатăн ал парсан.
Йĕри-тавра – тĕтре…
Ниме тăман çынран
Ниме тăман сăмах…
Вăй илчĕ халăхра.
Эс халь чунпа чăлах.
Тимлетĕн кăлăхах.
Шывпа вăл юхтăрах…

* * *

Кăшкăрса чĕнетĕп – эс илтместĕн.
Шăппăн асăнатăп çех ятна –
Çĕмрен пек ватса чуна, çитетĕн.
Ахрăма ятла хăть, ан ятла.

Ахрăм çилĕ тулхăрать шеллевсĕр.
Курăпин – умра, чăн сериал…
Саншăн пулнă çамрăклăх – йĕвенсĕр…
Ăшăтман эп тăснă ырă ал.

Вăратать-ши канлĕхне çав ахрăм?
Эс куран-ши вĕççĕр сериал?
…Пурнăçра эп ырă вăрлăх акрăм –
Чăн тĕреклĕх пачĕ ăраскал.

* * *

Пĕр талăк иртет,
Ик талăк иртет.
Эрне хыççăн – уйăх, çулталăк…
Мĕн чунăм кĕтет?
Мĕн кунăм кĕтет?
Тус-йыш кăмăлтан тăснă алă.

Утан утăмра,
Пурнан кунăмра
Мĕн чул çылăхсем!
Каçăлаç-ши?!
Кулап-юрăра,
Йĕреп-кулăра.
Пĕр тикĕс кунсем пулаяç-ши?

Юрлаç юрăра:
- Телей курăра?
Мĕскер вăл телей?
Кам ăнланнă?!
Чунпа кам – кăра,
Пурнать кам вăрах –
Чĕри – пайăн-пайăн ваклаиннă…

# ТĔРЛĔ КĔНЧЕЛЕ

* * *

Çаралчĕ эп савнă çаран,
Сывлать вăхăт-вăхăт вăл ассăн.
Анчах  вăл телейлĕ çынран.
Ешерĕ татах хĕл кайсассăн.

Вĕçеç кайăксем кăнтăра.
Вĕсемшĕн тĕнче – çутă тинĕс.
Килеç çуркунне капăрах,
Хываç савăнса çĕнĕ никĕс…

Тумне улăштарĕ вăрман.
Шывне улăштарĕ çырма та.
Çынна икĕ пурнăç паман,
Пурне те паман – хаклама та.

Çĕмрен пек вататпăр ăна.
Çынна çын халь, калăн, шăна…

* * *

Чӳречерен шаккать тăман:
- Эс халь те çывăрса тăман?
Кайма эп тухрăм çурçĕре.
Юлашки хут савап çĕре.

Хăваç мана çурхи çилсем.
Пит чеескер çурхи хĕвел,
Кулать ачашшăн:
- Питĕ шел.
Иртеççĕ савăк кунусем.

Эп ятлаçатăп:
-Тек ан кул!
Сана пула чунра халь чул.
Тивет тухма инçе çула,
Каварлă чун, сана пула.

Тумла анчах мана шеллет.
Куратăн, куççульпех йĕрет.

* * *

Пĕр чухне эп ют çынна шанатăп.
Тем чарать шанма çывăхрине.
Çывăхрипе юнашар шăнатăп,
Чĕрепе туятăп шăн чунне.

Елпĕрчĕк кулли кĕрхи кун евĕр:
Çук çути те ун, ăшши те çук.
Кĕсъери мăн чулĕ…
                  Ай, туссемĕр!
Сиртĕр Турă. Ан пĕрлештĕр çул.

Çакă çыннăн пурнăçри
                  ăнлавĕ –
Пуçсем тăрăх – тулькăш тăвалла.
Ăс-тăнпа кĕмĕлленмен тăнлавĕ.
Кулуя савать, мар тăвана.

Пĕр-пĕр чух вăл алăкран шаккать…
Çăлăнăç кирлех тĕк-сик вакка…

* * *

Сана та, ăна та, мана та
Çуратнă курмашкăн телей.
Пилленĕ.
                    Анчах та манатпăр
Ăçтан килнине çут тивлет.

Шыратпăр, шыратпăр…
                                        тупатпăр
(Кирлех тĕк) çынра хыт-хура…
"Çĕр кăвапи" пекех туятпăр,
Çапатпăр хĕрсех кăкăра.

Мăка çĕçĕпе каскалатпăр
Хăш чух пĕр-пĕрин чĕрине.
Васкавлăн мăн шăтăк чаватпăр –
Хавшакĕ ўкейтĕр ўпне…

Хавшакĕ ўкейтĕр ўпне…
Кĕтесĕ ун пултăр – ўпле.

## ÇЫВĂХ - ÇЫЛĂХ

Çывăх, çывăх,
Çывăх кăмăлсем…
Çылăх, çылăх –
Ырату кӳрсен…

Çывăх, çывăх…
Ална тăс та – ил.
«Çылăх, çылăх»,-
Пăшăлтатрĕ çил.

«Çылăх, çылăх, -
Çылăх – ăшри сас. –
Çынлăх, çынлăх…
Çухатас пулмасть».

Çывăх, çывăх…
Хушăра – çыран…
Çынлăх, çынлăх,
Ыйхăран вăран!..

* * *

Пĕр чух мана эс кĕлчечек сĕнетĕн.
Пĕр чух парне чикетĕн кĕсьене.
...Миҫе хутчен ман тĕлĕке кĕрсен те
Вут хыптараймăн лăпкă чĕрене.

Сана эп нихăҫан аса илместĕп.
Шăнкăравпа ман канлĕхе ан тат.
Шухăшсемпе те каялла вĕҫместĕп.
Телей анчах сунап пурнăҫунта.

Шăпам тертпе пайтах ман тĕксĕмленнĕ,
Анчах вăл тăрă кўлĕ пек таса.
Эп пурнăҫра хам ҫемьепе киленнĕ
Вак-тĕвеке типтерлĕн сапласа...

Вут хыптараймăн лăпкă чĕрене.
Мĕн-ма ҫырап-ха ҫак йĕркесене?!

* * *

Пурнăç – пыл та çу.
Кĕл – пурнăç…
Курнăç хĕвелпе.
Тăвăлпа курнăç.

Çиле хирĕç ут.
Ут çиле майăн.
Хĕнпе тулăн,
Савнăçпа тулайăн.

Чĕрӳне эс ваклăн
Пайăн-пайăн.
Çăтмаха-и, тамăка-и –
Кайăн…

* * *

Утăн-и эс, чупăн-и?
Ĕмĕт – шиксĕр.
Ахах-мерчен тупăн-и?
Уçлăх – чиксĕр…

Ахах-мерчен кирлĕ-ши?
Кăмăл – выçă.
Лăпкасассăн чун ăшши
Мĕн пĕр ывçă?

Саланать ахах-мерчен –
Пĕр самантлăх.
Васкаварлăх – пит черчен.
Тимлĕх – шатлăх…

* * *

Ĕнер анчах çиçеттĕр кулăпа,
Ĕнер анчах пĕр кĕвĕ ĕнĕрлеттĕр…
Паян пыратăр иккĕн ик çулпа.

Тупа сире пĕр тĕвĕпе çыхман.
Пулни-иртни йăлт манăçнă иккен.
Çулăрсене шăлать, шăлать тăман…

Йăлт манăçнă. Шутлатăр – таврăнмаç.
Йăлт манăçнă? Тен, тĕлĕрет анчах пуль?
Чĕрӳ систерĕ пĕр-пĕр ир е каç.

…Анчах та палăрмаççĕ халь çулсем.
Йĕреççĕ, тулхăраççĕ чунăрсем…

* * *

Çĕрле.
Курмастăп куççулне.
Туятăп, макăрать гитара:
«Савниçĕм урăххипе кайрĕ»,
Касать çак юрă чĕрене.

Йĕрет хут купăс аякра.
Пĕрле йĕрет ав, кĕмĕл сасă;
«Мана, саниçĕм, пăрахсассăн,
Телей ан кур эс пурнăçра»,

Ах, ма килет-ши тĕл пулу,
Турри çырнах-тăк уйрăлмашкăн.
Чăнах, пит йывăр уйрăлу,
Гитара, лăплансем, тархасшăн.

Хут купăс, ан хумхат ире.
Чăн тĕл пулу сунап Сире.

* * *

Çакăнта эп сана тĕл пулсаччĕ.
Ăшшăн култăн:
«Тăхта, пирĕшти».
Тӳперен çăлтăр яр! шуса анчĕ.
Çул кăтартрĕ сив уйăх çути.

Чун туятчĕ:
çак çул тăвăрахчĕ…
Темториесе шав вăркатчĕ чĕре.
Халь анчах эп санпа юнашарччĕ.
Юнашарччĕ.
Юлан кĕвĕре.

Юхан шыв варрине вăркăнтартăм
Эсĕ пухнă ахах парнене.
… Хуйхăма хум айне-ши пытартăм?
Тен, ăс патăм ухмах чĕрене?!

* * *

Сирĕн анăр çине эп пусманччĕ..
Пахчăрта юрламан нихăçан…
Куллăм сирĕншĕн пулнă вăтанчăк,
Сăнама тăрăшса аякран…

Пĕр йĕрке те сире пиллеменччĕ,
Пĕр кĕвве те сире пиллемен.
Пахчăрти шăпчăк темшĕн иленчĕ,
Юррăма шăппăн-шăппăн ĕнерчĕ…
Эп чĕнмен-çке ăна. Илĕртмен.

Сирĕн анăр çине эп пусмарăм…
Юрламарăм юрра пахчăрта.
Шăпчăксем çеç юрлаç мăшăршарăн
Ман умра. Тен, юрлаç умăрта?

* * *

Танлаштартăм çăлтăрпа,
Çунаймарăн – сÿнтĕн.
Танлаштартăм хĕвелпе,
Ăшăтмарăн – кÿнтĕм.

Пултăн уйăх –
сивĕ каç.
Юлташ мар эс.
Пуш хутаç…

## ПИҪЕН ҪЫХХИ

Чӑн-чӑн маяк пулсаччӗ эс.
                                        Чӑнах.
Чӑн-чӑн телей сунсаччӗ эп сана.
…Чечек пуххи тытасшӑнччӗ кӑна –
Пиҫен ҫыххи ҫакланчӗ аллӑма…

Эпир  санпа тӗл пулнӑ вӑхӑтра
Ҫанталӑк тӑчӗ чарӑнми кӑра.
Кулатчӗ ҫут хӗвелӗ шутласа…
Тен, туйнӑ вӑл ҫулсем
                                        уйрӑласса?

Сапатчӗҫ вут эп савнӑ вӑхӑтра
Хӗм пилешсем. Хур-кайӑк – кӑнтӑра.
…Хӗм пилешсем. Кӗрен пиҫен ҫыххи…
Алла лексессӗн ванчӗ пыл курки.

* * *

Эс ӑна манайсан,
Вӑл сана манайсан
Пурӑнма, тен, пулатчӗ ансат.

Асӑнатӑр ирпе,
Асӑнатӑр каçпа.
Чӗрӗре мӑка çӗçӗ касать.

Çӑмӑл теççӗ манма,
Çӗн телей шырама.
Чӗрене çӑрапа питӗреймӗн.

Çӗмрен пек çӗмӗрсе,
Ик хушша çын кӗрсен –
Чӑн-чӑн туйӑмпа çех çӗнтерейӗн.

* * *

Тĕл пултăмăр.
Тек ним те кирлĕ мар.
Хĕвел кулса çӳл тӳпене хăпарчĕ.
Атя, ларар-ха иккĕн юнашар.
Чун-чĕресем пĕр кĕвĕпе юрлаччăр.
Пĕр кĕвĕпе.
Эс – тенор.
Эпĕ – альт.
Юхайтăр кĕвĕ – пулайса чăн юрă…
Анчах чăн юрă пурнăçра пулать.
Ку – тĕлĕк çеç.
Çырман, çырман-çке Турă
Пире дуэтлăх юрă…

* * *

Шур юр çинче, ав, мăшăр йĕр…
Телей патне-ши ăнтăлаççĕ?
Ăçта чĕнет çак тĕттĕм çĕр?
Çак тĕнчере мĕскер шыраççĕ?

Çак тĕнчере мĕскер шыраççĕ?
Çак  пурнăçран мĕскер кĕтеççĕ?
Те савăнса вĕсем кулаççĕ?
Те хурланса вĕсем йĕреççĕ?

Пахи – паян вĕсем пĕрле.
Çак пурнăçа пĕрле йĕрлес…

## УН ЧĔЛХИ ÇИНЧЕ ÇĂПАН

Пачĕ канлĕхне шăпа,
Ял сас-чӳсĕр. Шăп-шăпах.
Иртрĕ икĕ кун кăна –
Асăнаççĕ Вассана.

- Ывăнчĕ пуль ял касса,
Пач! çухалчĕ, çук Васса, -
Тĕлĕнсе калать Kaçук.
Çук Васса. Сăмах та çук.

Кам çуратнă? Кам-тăр вилнĕ?
Кам-тăр сутнă? Кам-тăр илнĕ?
Хĕр çураçнă. Авлантарнă.
Кам-тăр юлнă? Кам-тăр тарнă?

Кам-ши парĕ каласа?
Çта çухалтăн-ши, Васса?!

-Ун чĕлхи çинче çăпан,-
Савăнса калать Çтаппан.
Хăй çине хурать хĕрес:
-Тавах, Туррăм! Илтрĕн эс.

## ВИÇ ПУСПА

Виç пуспа ăсна сутатăн,
Çур пуспа – тус-тăванна:
Пуçсем тăрăх эс утатăн.
Хăв шутлатăн – тăвалла.
Тăвалла?! Унта çитме
Укçапа ултав сахал.
Çанă тавăрса кал-кал –
Вĕренсемччĕ ĕçлеме.

Ăс- тăнна кăштах якат.
Çўп аксан – çўпех шăтать.

## ПĂВАН

Пуçлăх эс паян.
Çавăнпа шутлан:
Пуринчен аван.

Ку вăл санăн – чир.
Сан çумра эпир
Çут хĕвелсĕр ир.

Пурччĕ тус-тăван…
Эсĕ халь – пăван:
Вĕсене сăхан.

Пилсĕр пурăнан –
Хăвна ху пăван…

* * *

Саккунпа, лицензипе хушаҫҫӗ:
Ват та ҫӗмӗр, мӗн пур – йӑлт вӑрла…
Йӗксӗксем ҫын нушине курмаҫҫӗ,
Пурнӑҫа тӑсаҫҫӗ мухмӑрла…

Пӗлтерӳ ак хаҫатра вулатӑп:
Йышӑнаҫҫӗ пур ҫӗрте металл:
Алюмини, пӑхӑр…мӗн тупатӑн,
Пурнӑҫу мала каять кал-кал…

Кинеми паян апатсӑр юлнӑ.
Йӑлт вӑрланӑ чашӑк-тирӗкне.
Пӗр услап, вӑл чӑн-чӑн хура юнлӑ –
Уявлать паян пилсӗрлӗхне…

# КĔВĔЛЕНĔ СĂВĂСЕМ

## ПУРНĂÇ

Тур хушмасăр çула эп тухман.
Çав çулпа ăнсăртран эс утман.
Ăнсăртран пĕрлешмен çул юппи.
Телее иккĕн тупнă эпир.

Пурнăçра килĕшӳ, ăнлану.
Ман чуна ăшăтать сан чуну.
Чи ăсли эсĕ ман, чи ăсти.
Чун турамĕ эс ман, пирĕшти.

Сивĕ çил – и е çутă хĕвел –
Юнашар Турă çырнă утма.
Паянччен пурнăç тĕрĕс-тĕкел
Пĕлнĕрен пĕр-пĕрне ăнланма.

Кĕркунне еннелле васкаса
Ăнтăлаççĕ кĕскелнĕ кунсем.
Ватлăха йышăнар лăпланса,
Ун парни – ачасем, мăнуксем.

# ĂÇТА ÇӲРЕТĔН ЭС ÇĔТСЕ?

Ăçта çӳретĕн эс çĕтсе?
Шуралчĕ сăн сана кĕтсе.
Пит хăвăрт кĕмĕлленчĕ çӳç.
Шупкалчĕ çăлтăр евĕр куç.
Ман асăмран тухмастăн эс.
Хăçан сана кĕтсе илес?
Ăçта çӳрĕтĕн эс çĕтсе?

Кĕтмен çĕртен çыру çыран.
Пĕлетĕп – хушăра çыран.
Шывсем юхаççĕ шавласа.
Хумсем чупаççĕ васкаса.
Пĕр чух мана аса илсен,
Эс хум çине ларса килсем.
Эс хум çине ларса килсем.

Илтсем мана, савни, илтсем.
Пĕр саншăн манăн юрăсем,
Пĕр саншăн манăн ĕмĕтсем,
Вĕçеççĕ сан патна вĕсем.
Чун-чĕрӳне уçса тăнла,
Ăнланăн шухăш-кăмăла.
Пуçтарăн васкаса çула.

Пуçтарăн васкаса çула,
Илсе пăрах чунри чула.
Пулсам тĕреклĕх ман валли,
Пулам тĕреклĕх сан валли.
Телей çиçейтĕр куç тулли,
Янратăр ача-пча кулли.
Пуçтарăн васкаса çула.

## ЕПЛЕ ХИТРЕ ТӐВАН ÇĔРШЫВ

Кĕтсе илтĕм савӑнса ире,
Хӑватпа тулайрĕ ман чĕре.
Куккукĕ авӑтать,
Вӑрманĕ янӑрать.
Епле хитре тӑван çĕршыв!

Савнипе утатпӑр çулпала.
Атӑл хĕрне пирĕн тухмалла.
Юх, Атӑл, çаврӑнса,
Ирт, кунӑм, юрласа.
Епле хитре тӑван çĕршыв!

Эп савса тавралӑха сӑнап.
Ырӑ куншӑн питĕ савӑнап.
Юрлаççĕ кайӑксем,
Юрлаççĕ чĕресем.
Епле хитре тӑван çĕршыв!

Ах, çĕршывӑм, тав тӑвап сана.
Чĕремре упратӑп сан сӑнна.
Кашлаччĕр вӑрмансем,
Ешерччĕр уй-хирсем.
Епле хитре тӑван çершыв!

## МАННĂ ВĂЛ

Вăштăр-вăштăр вăркăшать
Çурхи ăшă çил.
Савни сассипе калать:
"Ман пата эс кил".

***Шурă, шурă хуларан***
***Эп салам кĕтеп.***
***Çил сасси çех хăлхара...***
***Маннă вăл. Сисеп.***

Тахçанах ăна курман,
Вăл халь аякра.
Ĕçлесе вăл пурăнать
Шурă хулара.

Ялкăшса çиçеç хĕрсен
Çăлтăр-куçĕсем.
Асатаççĕ вĕсене
Савнă каччисем.

Ма тĕл пултăм пурнăçра
Çак юратăва?
Кĕтрĕм кĕркунне, хĕлле...
Тухрăмăр çăва.

***Çав çавах-çке савнирен***
***Эп салам кĕтеп.***
***Çил сасси çех хăлхара...***
***Маннă вăл. Сисеп.***

## САВĂК ЮРРĂМ, ЮХ!

Симĕс ращапа утатăп,
Çулçăсем шĕпĕлтетеç
Савăк юррăма юрлатăп,
Çамрăк хурăнсем итлеç.

***Юх, юх, савăк юррăм, юх!***
***Савăк юррăма итлеме,***
***Савнă тусăм, тух.***

Чĕвĕл-чĕвĕл, чĕвĕл-чĕвĕл
Çепĕç саслă кайăксем:
"Çĕрĕм-шывăм, чĕрĕл, чĕрĕл"
Пирĕнпе юрлаç вĕсем.

Юхтăр юрă, вĕçтĕр юрă
Таврана, çунат сарса.
Çĕрĕм-шывăм, тулăх пурăн
Халăхна хăват парса.

## АХ, МĔН-МА САС ПАМАСТĂН?

Ах, мĕн-ма, ах, мĕн-ма
сас памастăн?
Ах, мĕн-ма алăкран шаккамастăн?
Мĕншĕн тухрăм-ши саншăн юта?
Манса кайрăн-и сăн-сăпата?

Манса кайрăн-и сăн сăпата?
Манса кайрăн-и çепĕç ята?
Тăвăрланчĕ-ши пирĕн сукмак?-
Туйăма эс пултартăн сутма.

Йăпанас терĕн пуль – йăпатмарăм,
Туйăма ăссăрла вылятмарăм.
Саншăн анлă халь тепĕр сукмак…
Юрату эп сунатăп тупма.

***Саншăн эпĕ халь ют.***
***Саншăн эпĕ халь ют.***
***Тепринпе çут малашлăха ут.***

## УРĂХХИ МАН ЧĔРЕРЕ

Мĕн шыратăн, мĕн кĕтетĕн
Пирĕн умра каççерен?
Эп савманнине пĕлетĕн.
Урăхxи ман чĕрере.

***Урăхxи, урăхxи, урăхxи ман чĕрере.***
***Килне кайса лăпкă çывăр,***
***Каллĕ-маллĕ ан çӳре.***

Çырусем çырса çавраймăн,
Ан хăвар чечек пуххи.
Сив хĕвеле култараймăн –
Ман чĕрере урăхxи.

Маншăн эсĕ пушă вырăн.
Ан пулсамччĕ куршанак.
Эс пĕлинччĕ, мĕнле ырă
Савнă çынна курсанах.

Ман чĕрере урăхxи те,
Куç умĕнче эсĕ çеç.
Тен, чуна çимешкĕн çитĕ? -
Санăн ытамна лекес?

***Урăхxи, урăхxи çунтармасть халь чĕрене.***
***Уткала-ха каллĕ-маллĕ…***
***Часах тухăп пӳрт умне.***

## ПУРНĂÇРА ЭС МАН ПĔРРЕЧЧĔ

Юрату сиксе вĕретчĕ чĕрере.
Чи телейличчĕ санпа эп тĕнчере.
Эс савса тупа тăваттăн,
Эп сана чунран шанаттăм.
Çутçанталăк та яратчĕ пил пире.

Ĕнер каç та клуб кĕрлерĕ халăхпа.
Ташă хыççăн таш ташларăн тантăшпа.
Теме сиснĕн, чун ыратрĕ,
Чарăнми чĕре вăркарĕ
Эп çунма пуçларăм  вутсăр çулăмпа.

Тантăша савса эс пăхрăн куçĕнчен,
Йăл кулса тем пашăлтатрăн хăлхинчен.
Кăлăхах куçпа шырарăм,
Ăсатма мана пымарăн.
Хурăнсем шеллевлĕн пăхрĕç: ”Ма
пĕччен?”

Куççуле çăтса сăнарăм хыçăртан.
Çăмăлрахчĕ, тен, эс урăха савсан.
Çавра çил те çавăраймĕ,
Çут хĕвел те ăшăтаймĕ,
Чĕрĕлеймĕ юратăвăм пĕр шансан.

***Пурнăçра эс ман пĕрреччĕ.***
***Юрату сиксе вĕретчĕ.***
***Куç хупаймăп эпĕ шуçăм киличчен.***
***Пурнăçра эс ман пĕрреччĕ,***
***Юрату сиксе вĕретчĕ***
***Чĕрере эс пуллăн ĕмĕр иртиччен.***

## КУЛЯНАТĂП

Пит чипер-çке сарă каччă.
Паллашсаччĕ халь кăна.
Кĕлчечек пуххийĕ пачĕ,
Хыт чуптурĕ вăл мана.

***Кулянатăп, кулянатăп,***
***Пите хытă кулянатăп:***
***"Çын курсассăн мĕн калать?"***
***А-а-х! Чĕре çунать,***
***Чĕре çунать, вутпа çунать.***
***Анне пĕлсен – ятлаçать.***

Каçсерен тухса чупатăп
Тĕл пулмашкăн улăха.
Эп юратупа çунатăп.
Тен, çунатăп кăлăхах.

Те савать? Ыйтма хăймастăп.
Вăл та уççăн каламасть.
Евчĕсем кĕтсе пурнатăп,
Анчах тусăм васкамасть.

Тĕксĕм пĕлĕт пек халь кунăм.
Тин ăнлантăм вăл камне.
Мĕншĕн савнă айван чунăм
Кўршĕ ял ултавçине?

***Чĕре çунать, чĕре çунать,***
***Чĕре çунать, вутпа çунать-***
***Халăх питĕ калаçать.***
***А-а-х! Эп шыратăп,***
***Савнă тусăма шыратăп,***
***Анчах вăл манран тарать.***

## ЭП – ЧӐВАШ

Ыйтаҫҫӗ: кам эс?
Эп калап: Чӑваш.
Пур халӑха тӑван та хурӑнташ.
Чӑвашлӑха туптатӑп ҫӗр ҫинче.
Чӑвашлӑхпа янратӑр ҫут тӗнче.

***Хӑватлӑ Чӗмпӗр ҫӗрӗ,***
***Сӑваплӑ Чӗмпӗр ҫӗрӗ,***
***Вӑл ҫӗр пин юрӑ-кӗвӗпе кӗрлет.***
***Чӑвашлӑха мухтатпӑр,***
***Чӗлхемӗре упратпӑр.***
***Пире вӑл ҫут малашлӑха чӗнет.***

Пур халӑхпа тупатӑп пӗр чӗлхе.
Чӑвашӑн чунӗнче сӳнми хӗлхем.
Ҫав хӗлхеме туйсан ачамӑрсем
Чӑвашлӑхра кун тупӗҫ мӑнуксем.

Сиксе вӗрет чӑвашлӑх чӗрере,
Илет вӑй-хал вӑл ҫак Чӗмпӗр Енре.
Вӑл Яковлев пиллевӗ. Чӑн пиллев.
Умра – малашлӑх. Ман чунра – вӗҫев.

Килет хӑватлӑх, шатлӑх хамӑртан.
Хастар пулар. Пур халӑхпа пӗр тан.
Чӑвашлӑха туптар-ха ҫӗр ҫинче.
Чӑвашлӑхпа янратӑр ҫут тӗнче.

## МА ТАТАТĂН ЁМĔТЕ?

Аякри çула ăсатрăм.
Çулу такăр пултăрах.
Купăса салхун тăсатăп,
Вăхăт иртнĕрен вăрах.

***Таврăн, таврăн хăвăртрах.***
***Хăçанччен çӳрес хăрах?!***

Кĕвĕ майăн ĕнеретĕп
Чĕрен çепĕç юррине.
Ёмĕтпе ялан вĕçетĕп
Эс сукмак хыван çĕре.

Çăвĕ çумăр, çиçĕ çиçĕм
Е çĕкленĕ çил-тăман…
Эс ан ман мана, савниçĕм,
Пурнăçри тĕрекĕм ман.

Куç илмесĕр тинкеретĕп
Ирĕн-каçăн инçете.
Ма вăрах çĕтсе çӳретĕн?
Ма тататăн ёмĕте?

## САЛТАК АМĂШĔ

Питĕ лăпкă, пит кăмăллă каçĕ.
Ырă уйăх сапать çутине.
Салтака çамрăка ăсатаççĕ.
Пур тăванĕ шăлать куççульне.

Пехиллет ывăлне шăппăн амăш:
- Çĕршыва, ыльăм, лайăх сыхла.
- Ан кулян, хĕвеле сÿнме памăп.
Канлĕ çывăрĕ ял та хула.

Ыталать амăшне çамрăк каччă,
Хăй тартать салхулланнă куçне.
Атте Турă! Ялан
пулăшсамччĕ
Çула тухнă тĕпренчĕкĕме.

Унтанпа миçе хут улăштарчĕ
Хăй тумне пуçне уснă вăрман.
Таврăнмарĕ килне çамрăк каччă.
Палăрми çулне шăлчĕ тăман.

Кантăкран-и шаккать чăрсăр çилĕ,
Е силлет-и хавшак алăка,
- Тав Турра, тинех
ывăлăм çитрĕ,-
Çухатмасть амăш çут шанчăка.

* * *

Çынна кӳрентерме нумай-и кирлĕ?!
Чĕлхе чараксăр, ыткăнать сăмах.
Шанмасть чĕре. Пулмастпăр урлă-пирлĕ.
Кураймансем, ан тив, палкаччăрах.

***Шанмасть чĕре!***
***Шанмасть чĕре!***
***Чăн юрату***
***Сыхлать пире.***

Халь çуркунне. Çĕршыв юрланăçемĕн
Уçатăп яриех чӳречене.
Чĕнет урам. Юхать асамлă çемĕ.
Аса илетĕп иртнĕ кунсене.

Уйрăлупа эп туйăма ĕнерĕп.
Сана та кĕтĕ тĕрĕслев – çулу.
Сывах-ха пирĕн юрату кĕперĕ.
Туятăп эп – малта-ха тĕлпулу.

## САВСАХ КИЛТĔМĔР

Мĕнтери хаваслӑ кун!
Савӑнса юрлать ман чун.
Мĕнле савӑнмӑн ара:
Эпир кунта хӑнара.

***Йыхрав илтĕмĕр,***
***Савсах килтĕмĕр.***
***Йыхрав илтĕмĕр,***
***Савсах килтĕмĕр.***

Кам чунпа хитре, пуян,
Кам хастар – кунта паян.
Чӑвашпа чӑваш пĕрле.
Янăра уяв, кĕрле!

Ай, юрлар-и савӑнса.
Пурнӑç пытӑрччĕ ӑнса.
Тулли пултӑр кĕреке,
Симпыл ĕçтĕр килекен.

Тайма пуç пиртен сире.
Туслӑх пытӑр ĕмĕре.
Эс хӑвна мӑна ан хур,
Пирĕн пата пырса кур.

***Савсах чĕнетпĕр.***
***Чунтан кĕтетпĕр.***
***Савсах чĕнетпĕр.***
***Чунтан кĕтетпĕр.***

## КАВИР ТĔРТЕТĔП

Кавир тĕртетĕп, кавир тĕртетĕп,
Кавир тĕртетĕп чечексенчен.
Кунри хăватăм, чунри хĕвелĕм
Ялан упранĕ вĕсенче.

***Умна сарса хурăп,***
***Умна сарса хурăп***
***Чечен кавире –***
***Ялан телей кӳтĕр,***
***Ялан телей кӳтĕр пире.***

Хĕрлĕ чечекĕ, кĕрен чечекĕ,
Шап-шур чечекĕ йăран-йăран.
Тĕксĕммине çех унта кĕртместĕп –
Хĕвел пек çиçтĕр вăл ялан.

Савсах тĕртетĕп, чунтан тĕртетĕп.
Илемлĕ пулĕ-ши ман кавир?
Савма пĕлсессĕн, кĕтме пĕлсессĕн
Телейлĕ пулăпăр эпир.

## АННЕÇĔМ КĔТЕТ

Аннеçĕм кĕтет пуль пире,
Аннеçĕм кĕтет пуль пире.
Сăра вĕретет пуль,
Хуплу пĕçерет пуль.
Тăрать пуль тухса пӳрт умне.
А-а-а, а-а-а-а…
Тăрать пуль тухса пӳрт умне.

Васкасчĕ тухмашкăн çула,
Васкачĕ тухмашкăн çула.
Ĕçе хăварасчĕ,
Çула кĕскетесчĕ,
Çитесчĕ тăван ялăма.
А-а-а, а-а-а-а…
Çитесчĕ тăван ялăма.

Уçасчĕ яри алăка,
Уçасчĕ яри алăка.
Савса ыталасчĕ,
Ирччен калаçасчĕ,
Сиплесчĕ кăштах ватлăхна.

Ах, вăхăт иртет шутласах,
Кайса курайман час-часах.
Анне юратать вăл,
Анне касарать вăл
Куçне вăрттăн-вăрттăн шăлса.
А-а-а, а-а-а-а…
Куçне вăрттăн-вăрттăн шăлса.
Вăрттăн-вăрттăн шăлса.

## ÇĚНĚ КУНА

Ырă ире ырă туйăм
Çурса кěрсен
Çěн хăватпа эсě тулăн.
Ан яр тěртсе.

***Çěнě куна, çěнě куна***
***Пěрле утар.***
***Чăн телее, чăн телее***
***Пěрле тупар.***

Турă пире парнеленě
Пěр такăр çул.
Санран хакли пурнăçра ман
Никам та çук.

Мěн йўççине те тутлине
Икке пайлар.
Алла-аллăн пурнăç тăрăх
Савса утар.

Ырă куна ырă туйăм
Çурса кěрсен
Çěн хăватпа эсě тулăн.
Ан яр тěртсе.

***Чăн телее, чăн телее***
***Пěрле тупар.***
***Юратăва, юратăва***
***Ялан упрар.***

# ТĂВАН ЯЛĂМ

Çук тулли юхан шыв. Çук вăрман.
Çеçен хир, çеçен хир, çеçен хир…
Сан çинчен чаплă юрă çырман,
Пурпĕрех эс пилленĕ çут ир.

***Çуралнă ял, юратнă ял.***
***Паратăн пурнăçра вăй-хал.***

Ăшăх шывĕ – пĕр тан Атăлпа,
Умри сад – пĕртăван вăрманпа.
Уйăм-хирĕм – пуян çăкăрпа.
Ялăм-йышăм – тулли кăмăлпа.

Çеçен хир ачашланă мана,
Вăштăр çил çупăрланă мана.
Савнă ял… Курнăнах тăвана,
Пултарап-и ăна эп манма?!

Пуç çитмест пуль сире пуç тайсан,
Юрласассăн – çитмест пуль сăмах.
Вĕçсе çитĕттĕм майĕ пулсан
Сан пата, кĕттермесĕр вăрах.

## ĂНТĂЛАТĂП САН ПАТНА

Каллех ăнтăлатăп эп сан патна,
Каллех ĕнеретĕп эп сан ятна.
Пит йывăр-çке çулăм,-
Утмаç урасем.
Кĕтмен тĕлпулу – асаплă кунсем…

***Кĕтмен тĕлпулу –***
***Асаплă кунсем.***
***Пит йывăр ман çул,***
***Утмаç урасем.***
***А-а-а, а-а-а-а-а.***

Тумхахлă çула ман ватас килет,
Ачаш куллăма ман упрас килет.
Санпа тĕл пулсассăн – чĕлхеçĕм çĕтет,
Анчах тĕлпулу çавах илĕртет.

Манма хăвăртрах тупаясчĕ эмел.
Чуна çĕклентертĕр çĕнелнĕ хĕвел…
Анчах ăнтăлатăп каллех сан патна.
Чĕрем ĕнерет сан хаклă ятна.

## ЮРАТУ ЧЕЧЕКĔ ШАННĂ

Юрату чечекĕ шаннă,
Тахçанах хĕлхем сапмасть.
Эп сана, савниçĕм маннă.
Тек черемçĕм ыратмасть.

***Ыратмасть черемçĕм,***
***Ыратмасть чĕрем,***
***Анчах каçсерен эс***
***Тĕлĕке кĕрен.***
***Çавăн пек чух***
***Чечеке ларатăп.***
***Çĕр çинче***
***Пĕр саншăн пурăнатăп.***

Вăхăта эп шутламастăп,
Çук ўпкев çанталăка.
Сывламастăп ассăн-ассăн
Шаккасассăн кантăка.

Çил пулса вĕçсе саланчĕç
Эс калана сăмахсем.
Юрату чечекĕ шаннă:
Чĕртеймеç çурхи кунсем.

## КИРЛĔ МАР МАНА НУМАЙ

Кирлĕ мар мана  нумай, кирлĕ мар.
Пул хутран-ситрен манпа юнашар.
Парнеле хутран-ситрен куллуна –
Ĕмĕр тытăп умăмра сан сăнна.

***Тĕл пултăмăр, тĕл пултăмăр***
***Хаваслă кун.***
***Çут ĕмĕтĕм, çут çăлтăрăм,***
***Пĕр маншăн çун.***

Кирлĕ мар мана нумай, кирлĕ мар,
Тĕксĕм кунăмра пулсамччĕ хунар.
Ăшшуна эп туям чунăмпа,
Ун чух тулĕ пурнăçăм хăватпа.

Пурнăсра эс пурри – вăл телей:
Пурăнас, юратас ман килет.
Сарăлса çĕкленеç çунатсем,
Çĕнелсе ешереç ман кунсем.

# ЧУНТАН САВСАССĂН

Пулать иккен
Çапла та пурнăçра –
Калаççĕ: ”Шурă”,
Эс калан: ”Хура”.

***Чунтан савсассăн***
***Ялан çапла -***
***Эс ылтăн тетĕн***
***Хура чула.***

”Хура-çке”,- теççĕ,
”Шурă”,- тетĕн эс.
Çавра – пур çыншăн,
Саншăн – виç кĕтес.

”Мĕн тупрăн? – теççĕ,-
Эс ун çумĕнче?”
Кулатăн ăшшăн:
”Маншăн вăл – тĕнче…”

Куна пайлатăн
Турă çырнипе.
Тăватăн шурă
Ĕмĕр тăршшĕпе…

# ХАЛАЛСЕМ

**"Кĕмĕл сасă" фестивале халалатăп**

## КУÇ ТУЛЛИ ХУЛА

Куçăм умне тухса тăчĕ
Шурă Шупашкар.
Килсе курма Турă çырчĕ:
Чăн – чăн пархатар.

***Атăл çинче пăрахутсем***
***Шур акăшсем пек.***
***Çыннисем пит тараватлă –***
***Хаклă тăван пек.***
***Шупашкар, Шупашкар,***
***Куç тулли хула!***
***Сан умăнта пуç тайса***
***Тухрăм эп çула.***

Савăнса, чунтан калатăп:
-Чĕмпĕртен салам!
Тăван халăхран хакли çук
Тĕнчере никам.

Кăмăлтан ăша хыватăп
Эп чăвашлăха.
Çак юрра эп парнелетĕп
Тăван халăха.

Хурçă утăрсене кўлĕр -
Кăн – кăвак инçет…

Пирĕн пата пырса çӳрĕр,
Чĕмпĕр ен кĕтет.

***Атăл çинче пăрахутсем***
***Шур акăшсем пек.***
***Чĕмпĕр енсем кĕтсе илĕç***
***Чăн – чăн хуçа пек.***
***Шупашкар, Шупашкар,***
***Куç тулли хула.***
***Уйрăлатпăр. Пуç таятăп.***
***Тухмалла çула.***
***Шупашкар, Шупашкар,***
***Манас çук сана.***
***Чун –чĕререн кăмăлларăм.***
***Шел. Хăна кăна.***

Чăваш хастарне О.Н.Мустаева

## ÇĂМĂЛ МАР

Çăмăл мар, çăмăл мар
Çĕр çинче пурăнма.
Çут хĕвеллĕн кулма
Çăмăл мар, çăмăл мар.

***Хураран шуррине***
***Уйăрма çăмăл мар.***
***Пуррине упрама,***
***Ыр сынна хаклама,***
***Турă, пар пархатар.***

Çăмăл мар, çăмăл мар
Çиле хирĕç утма…
Илеме упрама
Çăмăл мар, çăмăл мар.

Çăмăл мар, çăмăл мар
Пурнăçра такăнсан.
Ĕмĕтсем татăлсан -
Çăмăл мар, çăмăл мар.

В.И.Сваева

## ÇУК КУН ЕВĔР ПАРХАТАР

Ешерет-çке Чĕмпĕр енĕм:
Куç тулли уйсем, хирсем…
Вăрмансем ав, куç хĕсеççĕ:
"Манăн ытама килсем".

***Ай-хай! çĕрĕм-шывăм…***
***Пăхса ытармалла мар.***
***Тĕнчене касса хăть шырăр-***
***Çук кун евĕр пархатар.***

Чарăнса тăрса итлетĕп
Ирхи канлĕ шăплăха.
Чĕререн савма пиллет вăл
Çак мухтавлă халăха.

Çуралса кунта сас панă
Чăн мухтавлă чăвашсем,
Чĕмпĕр ен чапне туптанă
Тĕнче шайĕнче вĕсем.

А.Юмана

* * *

Ĕçтеш мана сĕнет сонет:
- Тух вуласа. Тимле. Вĕрен.
Сонет вырнаçрĕ чĕрене –
Çуралтăм, тейĕн, çĕнĕрен.

Ĕçтешĕм туйнă туйăмсем
Чунра чĕртейрĕç вут-кăвар.
Чечекленеççĕ халь кунсем.
Умра – асамлă çут сăнар.

Умра асамлă çут сăнар.
Ачашшăн вăл чĕнет, хистет.
Ак аллăм шур хута йĕрлет…
Кĕтни пулайрĕ-ши?
Курар.

«Вĕçле, вĕçле»,- ăс-тăн хистет.
Пиççех çитейрĕ-ши сонет?

Ф.Т. Улендеевана
В.А. Архипована

* * *

Пĕр çулпа, пĕр çулпа
Эп утатăп санпа.
Пĕр çулпа, пĕр çулпа, юнашар.
Эс тумарăн тупа,
Эп тумарăм тупа –
Турă пачĕ çапах пархатар.

Çут шăпа пӳрнипе,
Çут хĕвел ăшшипе
Çул тумхахĕ пире чăрмав мар.
Эсĕ ăшшăн кулсан,
Эпĕ ăшшăн кулсан –
Именсе, пач! çухалĕ тип-шар…

Малалла çеç пăхар.
Малалла çеç утар.
Манас марччĕ çапах иртнине.
Пурнăçа шĕкĕлчер,
Кирлине çеç илер…
Турă патăр пире хăватне.

Тăвансене

* * *

Хуйхуна çын çине кăларма
эс ан тăрăш,
Куллуна пытарма эс ан тăрăш
нихçан.
Кулăпа кам утать, хĕвел пек,
пурнăç тăрăх –
Хăватпа, илемпе асамлать
пурнăçа.

Сив, усал сăмаха тăнлама эс
ан тăрăш –
Ан вырнаçтăр кĕрсе
черченке чĕрӳне.
Ман пиллев сăмахне хыв ăшна.
Пурнăç вăрăм.
Тавăрмашкăн ан тăрăш нихçан
çынсене.

Çакăрпа тăвара ан шелле
нихăçан эс:
Вăл килет çаврăнса çул-çул урлă
калле…
Вăй хурса ĕçлеме пултăр
тавăрнă çанă…
Турă патăрччĕ.
Çиттĕр ман сиплĕ пиллев…

Иван Саландаева

* * *

Санпа эпир "Чĕре" йăхне
пуль хунă:
Асаннесем-çке пирĕн пĕр килтен.
Çыратпăр сăвă – чăтăм çиттĕр
хутăн.
Хут варласах тӳнетпĕр те-и, тен.

Тур панине ăçта чиксе хурайăн?
Хистет çырма вăл сăвă та
калав...
Ĕçлетпĕр-ха кун-çул хистенĕ майăн,
Ăс-тăнсене хĕрсех туптатпăр шав.

Ĕçле, Ванькка! Пĕр
чарăнми юрлаччăр
Саркайăксем поэзи пахчинче.
Сан сăввусем маяк пулса çутатчăр
Кунна, çулна ытарлă çĕр çинче.

«ЭРЕВЕТ» ансамбле

* * *

Чăваш юрри юхать, юхать...
Вĕçет мăнаçлăн Атăл çийĕн.
Пур вырăнта та çул тупать,
Кашни чĕре патне вăл çитнĕ.

Тĕлĕрекен чун хĕлĕхне,
Ачашшăн сĕртĕнсе, вăратнă.
Чăваш чĕриллĕ çынсене
Çак чаплă хор ретне тăратнă.

Янрать, кĕрлет халь «Эревет»,
Тӳрре тухайрĕ савăк ячĕ.
Ав, Шупашкар, Мускав кĕтет...
Куратпăр – вилĕмсĕр хăвачĕ.

Хастар вăл. Кăмăлĕ – тулли.
Тапса тăрать асамлăх, çынлăх.
Чăн-чăн чăваш – Кусар Кули.
Ятне те ылтăнпала çырнă.

Анатолипе Нина Еграшкинсене

* * *

Талпăнса шыраман.
Шутласа кăларман –
Куç умне тухса тăчĕ ÿкерчĕк.

Çутă янкăр тĕссем…
Илĕртеççĕ вĕсем.
Ах, мĕн-ма эп пулман-ши ÿнерçĕ?

Пÿрнесем вылянаç,
Куçăмсем тем сăнаç.
Аллăма тĕрлĕ сăр халь тытасчĕ.

Çак сăваплă ире
Парнелесчĕ сире.
Халăхра чăн илем хăварасчĕ.

Г.М.Никитинана

* * *

Çиçет çут çăлтăрла куçу.
Вăл, кÿлĕ пек, таса.
Юхса пырать-çке пурнăçу,
Пырать вăл юрласа.

Телĕй тулать те тăкăнать,
Анчах шăпа – кăра.
Ыр çын (нумай чух) такăнать.
Турă упратăрах.

Маша Фёдорована

* * *

Аса ил эс мана.
Аса ил.
Вучахне ан сӳнтертĕр
Сан кил.
Чӳречӳ ялкăшсан
Çутăпа,
Сăн-питӳ çуталсан
Кулăпа
Инçе çулăм самай
Кĕскелет.
Пурăнассăм, савассăм
Килет.
Аса ил эс мана.
Аса ил.
Пил яратăп. Эс яр мана
Пил.
Уçă саншăн чĕрем.
Уçă кил.
Çĕклемне санпа пайлăп.
Кил! Кил!

# *Валентина Таравата*
# *Хalalanӑ сӑвӑсем*

* * *

Валентина Тарават,
Кашнинех эс тарават.
Дипломант, лауреат…-
Тем чухлех сан чаплă ят.
Кирлĕ мар-ха саламат.
Ма тесен эс – чăн хăват.
Савăнса кула – кула
Паян тухрăмăр çула.
Янăрать Чĕмпĕр хули.
Кĕрекӳ паян тулли:
Сервелат, хуплу, салат…
Хăналать-çке Тарават.

Валентин Абрамов
2006ç.

## В. ТАРАВАТА

Сана сăпайлăх панă Турă,
Пилленĕ пулĕ вăй – хăват,
Чун хĕмĕпе юрлатăн юрă,-
Çĕр çул çапла пул, Тарават!

Ансат çулпа пырас темерĕн,-
Тумхахлă сукмакпа утан,
Нуша сана çĕнтереймерĕ
Чуну, Валя, хавшак мартан…

Мĕнле – ха ырăпа каламăн
Çак Çĕр çинче эс пуррине?...
Кашни сăвву таса, асамлăн
Эмеллетет çын чĕрине.

Кала пĕлен хĕрӳллĕ, вăйлă –
Вуланă май чун ăшăнать.
Ялан эс тĕрĕслĕхе майлă –
Нумай сăнар ăна шырать…

Çĕн Пурнăç суратать Çĕн Ĕмĕт –
Çын Ĕмĕтре курать хăйне…
Малта çиçет кĕтрет çут хĕмĕ –
Эпир утатпăр ун патне…

Анчах вутпа пайтах çын çуннă –
Кăварĕ вăйлă пулнăран…
Пире такам танмарлăх суннă
Майланă чух, тен, шур тăмран…

Пĕрне – вĕçме, куна – шуçмашкăн
Хушса, теем, Атте – Турри…
Шуççах тупать леш мел «пулмашкăн»,
Вĕçсен – вĕçсен – ўкет тепри…

Çунат сарсах вĕçсем, юлташăм,-
Пулсам ялан вунçиччĕре!
Пул тепĕр Çăлтăр та çун ăшшăн –
Сўнес чух ялкăшах тепре!

Серте Мишши
1995ç.

* * *

Çăмăл мар ку тĕнчере
Чăваш пулса çÿреме…
Пирĕн пур – ха Тарават –
Пурăнатпăр – ха вара!

Вун çултан та, çĕр çултан та
Калĕç чăваша курсан:
Сирĕн пур – ха Тарават –
Пурăнатăр – ха вара!

Савăнса. Ырă сунса.
Пуç тайса. Саламласа –
Пирĕн пур – ха Тарават
Сывă пултăр Тарават!

Николай Ларионов
1997ç.

* * *

«Çын – вăрлăх,- тенĕ ăслă вырăс,-
Ăçта ÿкет – шăтать унта.»
Эс шăтса ÿснĕ тутă, йăрăс
Чи тулăх çĕрлĕ вырăнта.

Ку Тутарстанăн пулнă хирĕ,
Акса шăварнă ыр чăваш.
Çав уй – хирте эс ÿснĕ ирĕк, -
Çап – çут тÿпе, сенкер малаш…

Ÿссе çынна çитмешкĕн пÿрнĕ
Сасартăк вырăс уйĕнче.
Çĕн тăрăхра яш ĕмĕр хĕрнĕ,
Ку – урăх, çĕн мăнаç тĕнче.

Çапах, ăçта кăна çитсен те,
Алран кайми аки – сухи
Шалта хулен сас панă ĕнтĕ
Чăн чăвашла, чи малтанхи…

Çав сас сана чĕнсе кăларчĕ
Чăвашлăх шăтнă тăрăха.
Эппин, халь ху акса хăварччĕ
Ыр вăрлăх çĕн малашлăха.

Анатолий Юман
1997ç.

## ЧАПЛĂРАН ТА ЧАПЛĂ КУН ЯЧĔПЕ

«**Ĕçчен мăнук**» «**Уяв парни**» кÿрет,
«**Çӳл тӳпере çич çалтăр**» йăлтăртатрĕ.
«**Хаклă сасса**» усратпăр чĕререх,
«**Чун тараси**» те чăн мулна кăтартрĕ.

Ах, самана! Ăçта илсе каян?!
Миçе çын ĕмĕтне шеллевсĕр татрăн?!
«**Шевле çути**» çук мар-и сан паян?
Эс «Çăлтăр шалкамне» пĕрех чармарăн.

Çула тухмашкăн çăмăл мар паян,
Ыр кăмăлшăн çул алăкне уçмаççĕ.
«**Çуралнă кун**» тесен, хăвах чухлан,
Чăн – чăн туссем чăрмав тесе тăмаççĕ.

Писатель тусусем:
Р.Сарпи, Гер. Желтухин, Н.Артемьева,В.Эльби,
Г.Чернов, В.Игнатьев, Д.Гордеев, П.Ялгир,
Борис Борлен,
Анат. Тимофеев тата иттисем.

2001ç.

## ХАЛАЛ

Вăтăр çул шыравра тар тăкатăн,
Сăвă, юрă, хайлав çуратса.
Çĕнĕрен çĕнĕ вăрлăх акатăн
Кĕнеке анине хуратса.

Сан ятна пĕлмен çын çук, пĕлетпĕр,
Эс илемлĕ чунпа та сăнпа.
Çĕнĕрен çĕн хайлав çеç кĕтетпĕр,
Ан ÿркен, мухтанатпăр санпа.

Вырăсла та çыран, куçаратăн,
Юрлама, ташлама пит ăста.
Çавăн пек сăн – сăпат Тараватăн,
Ун пек ÇЫН тĕл пулаймăн ниçта.

Тĕрĕслĕхшĕн чунна эс паратăн,
Ултава тĕп тăвасшăн çунан.
Çунатна тăхтамасăр саратăн
Пĕр – пĕр çын пулăшмашкăн ыйтсан.

Эп сунатăп сана çирĕп сывлăх,
Вăрăм ĕмĕр, телей, ăнăçу.
Малашлăх кунĕсем пулччĕр тулăх,
Тикĕс ирттĕр çапла пурнăçу.

Анатоли ЫРЬЯТ
2001ç.

## В. ТАРАВАТА
### *Кĕнеке уявĕ кунĕ*

Кĕрхи кайăк хур карти евĕр
Иртеççĕ васкавлăн кунсем.
Анчах та тапать – ха чĕремĕр,
Мала талпăнаççĕ чунсем.

Май çук вăхăта тăлламашкăн,
Хаклатпăр кашни саманта.
Пĕлместпĕр канса пурăнмашкăн,
Ялан тем кĕтет пек малта…

Çапла эпир пулнă. Унаннă.
Утатпăр тумхахлă çулпа.
Куççуль витĕр юрă юрланнă,
Çулсем витĕнсен те юрпа…

Пур тивĕç, хăват, пархатарлăх,
Сӳнмен-ха тур панă хĕлхем.
Кун-çулăмăр пирĕн ятарлă,
Ялавăмăр пирĕн – ИЛЕМ!

Хастаррăн, тумламмăн-тумламмăн
Ыраншăн паратпăр вăя.
Пуласлăх! Паяншăн вăтанмăн!
Юлмарăмăр эпĕр кая.

Çĕнрен ЧĔРĔЛӲ куç уççассăн,
Çĕклентĕмĕр кар! хумĕпе.

Туйнатчĕ тĕнче улшăнассăн
Хăватлă сăмах вăйĕпе…

Эпир – çав эпоха вучахĕ,
Çав тапхăр вăратрĕ пире.
Янрарĕ чăвашăн сăмахĕ!
Кăкларĕ хăрушă чире…

Пĕрремĕш ретре эсĕ пултăн,
Çуралчĕ ун чух Тарават.
Чĕрӳ вĕриленчĕ пуль вутăн,
Тĕп ĕçшĕн эс тупрăн хăват.

Пайтах кĕнеке парнелерĕн
Тăван халăха – чăваша.
Вут кайăкĕ эсĕ унерĕн,
Çунтартăн «хура» сывлăша…

Çак пулĕ историллĕ мисси:
Мĕнпур пултару – халăха.
Сана çавăнпа хисеплеççĕ,
Чĕнетĕн çынна ЧĂНЛĂХА…

Яту шав хисеплĕн упрантăр,
Янраччăр ялан юррусем.
Чăваш вĕсемпе хăватлантăр,
Тав тăвĕç çитес ăрусем.

Серте Мишши
2005ç.

* * *

Ял – йыш сана чунран савать,
Сăвву – юрру чуна лăпкать.
Чăн–чăн талант эс, Тарават!

Тухаççĕ çĕн кĕнекесем,
Кĕвĕленеççĕ юрăсем,
Ăçтан тупатăн вăй – хăват,
Турхан мухтавĕ, Тарават?!

Пĕрне – пĕри курни аван,
Эс манăн эмĕрхи тăван.
Тăван текен телей сунать –
Ялан маттур пул, Тарават!

Иван Саландаев
2001ç.

## ВАЛЕНТИНЕ ТАРАВАТ

О, как хочется дарить добро
И промолвить искреннее слово,
Но боюсь – воспеть моё перо
Поэтессу всё же не готово.

Твой полёт для нас непостижим,
За тобою – след грядущей славы,
Свод стихов твоих необозрим,
Как необозрима даль державы.

Сколько лет прошло уж, сколько зим,
Поэтический талант – не сноп на вилах,
Голову сломя, как лань, бежим,
А догнать тебя никто не в силах.

Радостно мне слышать голос твой
В летнюю жару и в зимние метели,
Пой мне песню, хочешь – с грустью пой,
Про года, что лихо пролетели.

Радугой взметнули в облаках
Крылья, что дарили вдохновенье,
Ты и в песне, и в своих стихах –
Вечной жизни вечное движенье.

Слышу голос твой издалека,
То на правом берегу, то – левом,
Для меня ты – бурная река
С полноводным, с удалью, напевом.

Небосвод покрылся синевой,
И весны раскрылась панорама,
Пой мне песню, хочешь – с грустью пой:
В ней мелодия, что пела мама.

Александр Богатов.
Ульяновск 2006г.

* * *

По духу мы сродни с тобою.
И я, признаться, очень рад,
Что мы идём одной стезею
О, Тарават! О, Тарават!

Сердца стучат в едином ритме
И гимны общие звучат.
Судьба поэта – поле битвы,
О, Тарават! О, Тарават!

Звезда твоя сияет ярко,
Поэзия цветёт, как сад.
Пиши, да так, чтоб было жарко,
О, Тарават! О, Тарават!

Ты – женщина, венец творенья,
Вершина дивной красоты.
Свет и любви, и вдохновенья,
И лучезарной чистоты.

Удачи же тебе, Валюша,
Во всём, и пусть твоё перо
Всегда тревожит наши души
И пробуждает в них добро.

Я знаю, ты готова к бою,
Как на своём посту солдат.
И преклоняюсь пред тобою,
О, Тарават! О, Тарават!

Александр Сидоров.
2007г.

# В.ТАРАВАТА - ЮБИЛЕЙ ЯЧЕПЕ!

Валентина Тарават,
Эс çына пит тарават!
Пур сан числă, чаплă ят:
Валентина Тарават!!!

Юрă – кĕвĕллĕ аппа,
Çуталса тăран чаппа!
Хăвна хăв эс лартрăн палăк –
Юратать сана ыр халăх!

Сăвăç, юрăç, композитор,
Режиссёр, вут – дирижёр,
Сана Турă Пилĕ çиттĕр!
Саншăн пултăр чĕрĕ çĕр!

Валентина Тарават –
Çиçĕм евĕр çут хăват!
Çĕршыва илем кӳретĕн,
Çынсене телей кӳретĕн!

Пурăн ташласа çĕр çул!
Халăхшăн çут Çăлтăр пул!
Юрă – кĕвĕллĕ хăват –
Валентина Тарават!

Раиса Сарби.
2006ç

* * *

Эпир сапаланнă ял-йыш пĕрчисем
Пĕрле пуçтарăннă паян.
Эпир тăван ялăн хастар элчисем…
Пуçна тав туса эс таян.

Уяв ячĕпе ял-йыш саламлать,
Сунать такăр çул, чăн хăват.
Сÿнми хайллавсем санран вăл ыйтать.
Ан юл парăмра, Тарават.

Чĕре туйнипе, анне чĕлхипе
Çырсам сăвăсем, юрăсем…
Санпа мухтанатпăр эпир чăннипе.
Маххă парас çук уписем.

Мулендеевы
Крлыковы
2006ç.

* * *

Сирĕн пурнăç – пирĕншĕн ыр тĕслĕх,
Ăмсанатпăр чĕререн Сире.
Çут мерчен пĕрчи пек кĕмĕл тĕслĕ
Таланту. Хуплаяс çук тĕтре.

Улĕмрен те юнашар утмашкăн
Пил паратăп кăмăлтан кăна.
Нихăçан ан пĕлĕр ватăлмашкăн
Çĕр çинче пулсассăн та хăна.

Хыçра юлтăр – и çул хыççăн çулĕ.
Чĕрӳнте ан чактăр хаклă мул.
Çулу ӳлĕмрен те такăр пултăр.
Пурĕнпе пĕрле шӳтле те кул.

Çутă ăраскал Сире сунатăп.
Пуç тайса, савса эп ал пусатăп.

Зоя Кузнецова
Чăваш Çĕпрел ялĕ
2001ç.

## САВСА, ТАВ ТУСА ПУÇ ТАЙСА

Тараватпа пĕрле ача-пча сасси.
Тараватпа пĕрле пур чăваш сасси.
Ун хăватĕнче – пирĕн пуласси.
Пирĕн ĕмĕтре – харăс утасси.

Çамрăк ăрăва вăй хăват парать.
Çамрăклăх вара çил-çунат сарать.
Çамрăк хунава вăл савса лăпкать,
Ун малашлăхне чĕрипе туять.

Пысăк хисепре пирĕн Тараватъ.
Çынлăх йывăçне куннĕн шăварать.
Пур ĕçре те вăл кăмăллă, хастар.
Унпа тан эпир чăваша мухтар.

Елена Кузьмина
Аслă Нагатка
1997ç.

## ТУПМАЛЛИ

### *ХАМ ÇУЛПАХ*

Чун-чĕре туртать, сакăл ут юртать .......... 6
Хам çулпах .......... 7
Турăран мĕн ыйтни йалт пулсассăн .......... 8
Паян ирпе эп куртăм кукука .......... 9
Эп сăвăç кăна маар .......... 10
Каçар .......... 11
Аса илӳ .......... 12
Шухăшсемпе таçта вĕçетĕп .......... 13
Эп шутлатăп .......... 14
Чирленĕ вăхăтра .......... 15
Çил пек вĕçетĕп пур çĕрте .......... 16
Çаврăнать çавра çил .......... 17
Чарăнми шĕпĕлтетеççĕ çамрăк çăкасем .......... 18
Сутмĕ никама .......... 19
Çурхи куна мĕскер çитет? .......... 20
Хур кайăксем кăнтăралла хускалчĕç .......... 21
Йывăçсем тĕлĕреççĕ. Ĕнтĕркенĕ çырма .......... 22
Канлĕх .......... 23
Шанăр .......... 24
Чечек курсассăн – чун кĕвве кĕтет .......... 25
Камран-ши çут хĕвел именчĕ? .......... 26
Таçта çĕтсе çӳренĕ пуль çулсем .......... 27
Ниме тăман сăмах .......... 28
Кăшкăрса чĕнетĕп – эс илтместĕн .......... 29
Пĕр талăк иртет, ик талăк иртет .......... 30

## *ТĔРЛĔ КĔНЧЕЛЕ*

Çаралчĕ эп савнă çаран....................................32
Чӳречерен шаккать тăман ....................................33
Пĕр чухне эп ют çынна шанатăп ....................................34
Сана та, ăна та, мана та çуратнă
курмашкăн телей....................................35
Çывăх – çылăх ....................................36
Пĕр чух мана эс кĕлчечек сĕнетĕн....................................37
Пурнăç – пыл та çу....................................38
Утăн-и эс, чупăн-и?....................................39
Ĕнер анчах çиçеттĕр кулăпа....................................40
Çĕрле. Курмастăп куççулне ....................................41
Çакăнта эп сана тĕл пулсаччĕ ....................................42
Сирĕн анăр çине эп пусманччĕ ....................................43
Танлаштартăм çăлтăрпа, çунаймарăн – сӳнтĕн ......44
Пиçен çыххи....................................45
Эс ăна манайсан ....................................46
Тĕл пултăмăр....................................47
Шур юр çинче, ав, мăшăр йĕр....................................48
Ун чĕлхи çинче çăпан ....................................49
Виç пуспа....................................50
Пăван....................................51
Саккунпа, лицензипе хушаççĕ ....................................52

## *КĔВĔЛЕНĔ САВĂСЕМ*

Пурнăç....................................55
Ăçта çӳретĕн эс çĕтсе?.................................... 56
Епле хитре тăван çĕршыв....................................57
Маннă вăл ....................................58
Савăк юррăм, юх ....................................59
Ах, мĕн-ма сас памастăн?.................................... 60

Урăххи ман чĕрере..........61
Пурнăçра эс ман пĕрреччĕ..........62
Кулянатăп..........63
Эп – чăваш..........64
Ма тататăн ĕмĕте?..........65
Салтак амăшĕ..........66
Çынна кӳрентерме нумай-и кирлĕ?!..........67
Савсах килтĕмĕр..........68
Кавир тĕртетĕп..........69
Аннеçĕм кĕтет..........70
Çĕнĕ куна..........71
Тăван ялăм..........72
Ăнтăлатăп сан патна..........73
Юрату чечекĕ шаннă..........74
Кирлĕ мар мана нумай..........75
Чунтан савсассăн..........76

## *ХАЛАЛСЕМ*

Куç тулли хула..........79
Çăмăл маар..........81
Çук кун евĕр пархатар..........82
Ĕçтеш мана сĕнет сонет..........83
Пĕр çулпа, пĕр çулпа эп утатăп санпа..........84
Хуйхуна çын çине кăларма эс ан тăрăш..........85
Санпа эпир ”Чĕре” йăхне пуль хунă..........86
Чăваш юрри юхать, юхать..........87
Талпăнса шыраман..........88
Çиçет çут çăлтăрла куçу..........89
Аса ил эс манна..........90

## ВАЛЕНТИНА ТАРАВАТА ХАЛАЛАНĂ СĂВĂСЕМ

Валентина Тарават, кашнинех эс тарават................93
В.Таравата. Сана сăпайлăх панă Турă.......................94
Çăмăл мар ку тĕнчере.................................................96
«Çын – вăрлăх, - тенĕ ăслă вырăс, - ..........................97
Чаплăран та чаплă кун ячĕпе .....................................98
Халал..............................................................................99
В.Таравата. Кĕнеке уявĕ кунĕ ................................100
Ял – йыш сана чунран савать..................................102
О, как хочется дарить добро ...................................103
По духу мы сродни с тобою.....................................105
В.Таравата – юбилей ячепе!................................... 106
Эпир сапаланнă ял-йыш пĕрчисем .........................107
Сирĕн пурнăç – пирĕншĕн ыр тĕслĕх .....................108
Савса, тав туса, пуç тайса.........................................109

**Валентина Тарават**

(Игнатьева Валентина Николаевна)

**СЕНКЕР ИНҪЕТ**
**Голубые дали**

Сборник стихотворений
на чувашском языке

В авторской редакции

Компьютерный набор Игнатьева Р.Д.
Оригинал-макет Александра ДИК
Фото Дедушкина В.В.

Отпечатано в "Типографии Облучинского"
432063 г. Ульяновск, ул. Гончарова, 11а
Тел.: 42-12-83, тел./факс 79-18-50
Тираж 250 экз. № заказа 031203

70.a

